27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 НОЯБРЬ, 3 ЭРНЕКУН 217(6712) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

# Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

### *Совет Союзӗн Маршалне МЕРЕЦКОВА Адмирала ГОЛОВКОНА*

КАРЕЛИ фрончӗн ҫарӗсем, ҪУРҪӖР флочӗн соединенийӗсемпе тата карапӗсемпе пӗрле кӗрешсе, Заполярьери йывӑр условисенче наступлени туса пырса, паян, ноябрӗн 1-мӗшӗнче, ПЕЧЕНГА (ПЕТСАМО) облаҫне нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех тасатса пӗтерчӗ.

ПЕЧЕНГА облаҫне ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: ЩЕРБАКОВ генерал-лейтенантӑн, АБСАЛЯМОВ генерал-майорӑн, МИКУЛЬСКИЙ генерал-майорӑн, КОРОТКОВ генерал-майорӑн, ЖУКОВ генерал-майорӑн, СОЛОВЬЕВ полковникӑн, ГРЕБЕНКИН полковникӑн, ПАНИН генерал-майорӑн, КАВЕРИН полковникӑн, КОЩЕЕНКО полковникӑн, ЛЫСЕНКО полковникӑн, КАЛИНОВСКИЙ полковникӑн, ХУДАЛОВ генерал-майорӑн, БЛАК полковникӑн, АМВРОСОВ полковникӑн, СОПЕНКО генерал-майорӑн, СТАРЦЕВ полковникӑн, НИКАНДРОВ полковникӑн, ЕВМЕНОВ полковникӑн, КРЫЛОВ полковникӑн, РАССОХИН полковникӑн, ДУБОВЦЕВ генерал-майорӑн, ҫыранри службӑн генерал-майорӗн КУСТАВӐН ҫарӗсем; МИХАЙЛОВ контр-адмиралӑн, ФОКИН контр-адмиралӑн, 1-мӗш рангри капитанӑн КУЗЬМИНӐН, 1-мӗш рангри капитанӑн КЛЕВЕНСКИН, 1-мӗш рангри капитанӑн КОЛЫШКИНӐН, 2-мӗш рангри капитанӑн АЛЕКСЕЕВӐН, 3-мӗш рангри капитанӑн ЗЮЗИНӐН, 3-мӗш рангри капитанӑн ФЕДОРОВӐН, 2-мӗш рангри капитанӑн КОРШУНОВИЧӐН морякӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн ДЕГТЯРЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПАНИТКИНӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ВОЕВОДИНӐН, ЯРОСЛАВЦЕВ полковникӑн, ГРИГОРЬЕВ полковникӑн, БАНДЮКЕВИЧ полковникӑн, МАНЯКИН полковникӑн, ДИХУТА полковникӑн, ХРАМОВ полковникӑн, ГОЛДЫХОВ подполковникӑн, ФЕТИСОВ подполковникӑн, ЕРЕСЬКО подполковникӑн, ШАПИРО подполковникӑн, ШЕПЕЛЬ подполковникӑн, ЗУБАРЕВ подполковникӑн, КРИВОШЕЕВ подполковникӑн, ГОЛУБЕВ майорӑн, ЕДЕМСКИЙ майорӑн, ВАКУРОВ майорӑн, БОЖКОВ полковникӑн, УХАНОВ полковникӑн, ЮСОВ подполковникӑн, ПЕРЛОВ полковникӑн, БЕРЕЗИН подполковникӑн, ДОЛУДЕНКО майорӑн, ТИТОВЧЕВ подполковникӑн, КОЗЛОВ подполковникӑн, РОГОВОЙ подполковникӑн, СОБОЛЕВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КОНОНОВӐН, СОКОЛОВ полковникӑн, ЮРЕНКОВ полковникӑн, СУЧКОВ подполковникӑн, ТЕРЕНТЬЕВ подполковникӑн, АРШИНЕВСКИЙ подполковникӑн, ТАРЧИЛИН подполковникӑн, ЛЕЩЕНКО подполковникӑн, КОРШУНОВ подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн СОКОЛОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ПРЕОБРАЖЕНСКИН, авиаци генерал-майорӗн КИДАЛИНСКИН, авиаци генерал-майорӗн ПЕТРУХИНӐН, ЖАТЬКОВ полковникӑн, УДОНИН полковникӑн, ЛАРЮШКИН полковникӑн, ФИНОГЕНОВ полковникӑн, КАЛУГИН полковникӑн, МИНАЕВ полковникӑн, ПУШКАРЕВ полковникӑн, ПОГРЕШАЕВ полковникӑн, ЛИТВИНОВ подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ХРЕНОВӐН, ЛЕЙЧИК полковникӑн, АРШБА полковникӑн, ЗАХАРОВ подполковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ДОБЫКИНӐН, ЕКИМОВ полковникӑн, государство хӑрушсӑрлӑх майорӗн ГАВРИЛОВӐН, 2-мӗш рангри капитанӑн ПОЛОЗОКӐН связисчӗсем.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, КАРЕЛИ фрончӗн соединенийӗсемпе чаҫӗсене, ҫавӑн пекех тата ҪУРҪӖР флочӗн соединенийӗсемпе карапӗсене, ПЕЧЕНГА облаҫне ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑскерсене, орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, ноябрӗн 1-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, КАРЕЛИ фрончӗн паттӑр ҫарӗсемпе ҪУРҪӖР флочӗн морякӗсене, ПЕЧЕНГА облаҫне ирӗке кӑларнӑскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ҫавӑн пекех тата ҪУРҪӖР флочӗн соединенийӗсемпе карапӗсене, ПЕЧЕНГА облаҫне ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.*

1944 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗ.

## Совет Информаци Бюровӗнчен

### ОКТЯБРӖН 31-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Октябрӗн 31-мӗшӗнче Венгри ҫӗрӗнче НЬИРЕДЬХАЗА хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ХАЙДУ-НАНАШ хулине чугун ҫул станцине, ХАЙДУ-ДОРОГ хулипе чугун ҫул станцине, УЙГЕНЕЗ, ТОРНЬОШПАЛЬЦА, АНАРЧ, ДЬЮЛАХАЗА, НЬИР-КАРАС, НЬИР-ТАШИ, ПЕТНЕХАЗА, РАМОЧАХАЗА ятлӑ пысӑк ялсем тата УЙКЕНЕЗ, КОПОЧ-АПАТИ, ЯКО ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Ҫапӑҫусенче темиҫе хутчен те алӑран-алла куҫнӑ НЬИРЕДЬХАЗА хулине пирӗн ҫарсем ҫӗнӗрен йышӑннӑ.

БУДАПЕШТ хули енче, ТИССА шывӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинче, пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — АЛПАР, ИЖАК, КАЛОЧА, ЧАСАРТЕЛЬТЕШ, ХАЙОШ, АЛЬШО-МЕДЬ, ХОМОК-МЕДЬ, МИШКЕ, БАТЯ, ФАЙС, ДУШНОК, НЕМЕШНАДУДВАР, ШЮКЕШД, ЭРШЕКЧАНАД ятлӑ пысӑк ялсем тата КОХАРИ СЕНТ ЛОРАНЦИ, УРРЕТ, ПУСТА ПАКА, КАРХАНКЕЗ, БАЛЛОСЕГ, ПИРТ, КАЛОЧА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем КЕЧКЕМЕТ хулине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та тӑшманпа хула урамӗсенче ҫапӑҫма тытӑннӑ. ТИССА шывӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 4.018 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Октябрӗн 30-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗн пур фронтсенче нимӗҫсен 104 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 50 самолетне персе ӳкернӗ.

### НОЯБРӖН 1-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

КАРЕЛИ фрончӗн ҫарӗсем, ҪУРҪӖР флочӗн соединенийӗсемпе тата карапӗсемпе пӗрле кӗрешсе, Заполярьери йывӑр условисенче наступлени туса пырса, ноябрӗн 1-мӗшӗнче ПЕЧЕНГА (ПЕТСАМО) облаҫне нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех тасатса пӗтерчӗ.

Венгерсен НЬИРЕДЬХАЗА хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла тытса илнӗ, вӑл шутра — ЖУРК, ЗАГОНЫ, ТИСАБЕЗДЕД, МАНДОК, ТУЖЕР, ФРЕНЬЕШЛИТКЕ, САБОЛЧВЕРЕ-ШМАРТ, КИШ-ВАРДА, КАННАР, ДАУРАШАГА ятлӑ пысӑк ялсем тата МАНДОК, ФЕНЬЕШЛИТКЕ, КИШ-ВАРДА, ТЕДЕЛЬ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

БУДАПЕШТ хули енче пирӗн ҫарсем ТИССА шывӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинчи ҫулсен пысӑк узелне — КЕЧКЕМЕТ хулине тата КИШКЕРЕШ хулипе узловой чугун ҫул станцине тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — УЙ-КЕЧКЕ, ЛАЙОШМИЖЕ, КЕРЕКЕДЬХАЗА, ШОЛТЬАДКЕРТ, КЕЧЕЛЬ, ХАРТА, ДУНАПАТАЙ, ГЕДЕРЛАК, УСОД ятлӑ пысӑк ялсем. Октябрӗн 31-мӗшӗнче ТИССА шывӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинче пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 1.500 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Ҫапла вара, октябрӗн 31-мӗшӗ вӗҫленнӗ тӗле пирӗн ҫарсем ТИССА шывӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинче тыткӑна илнӗ нимӗҫсемпе венгерсен салтакӗсемпе офицерӗсен шучӗ 5.518 ҫынна ҫитнӗ. Ижак районӗнчи аэродромра пирӗн ҫарсем тӑшманӑн 48 самолетне тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Октябрӗн 31-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 129 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 20 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Карели фрончӗн ҫарӗсем Совет Заполярьине нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех тасатнӑ. Пирӗн боецсем, ҫурҫӗрти питех те йывӑр условисенче кӗрешсе, тӑшмана хыҫҫӑнах хӑваласа пыраҫҫӗ, ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Пӗр районра нимӗҫсем, совет чаҫӗсене малалла кайма чарасшӑн пулса, ҫул ҫине пысӑк отряд кӑларса тӑратнӑ. Пирӗн боецсен Шишов юлташ командир пулса ертсе пыракан ушкӑнӗ шурлӑхсем тӑрӑх кайса хыҫала тухнӑ та тӑшмана тылран атакӑланӑ. Гитлеровецсем совет боецӗсем пырса ҫапнине чӑтса тӑрайман, тарма пуҫланӑ. Тепӗр участокра пирӗн чаҫсем хаяр ҫапӑҫура 400 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Венгри ҫӗрӗнче Ньиредьхаза хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри пӗр участокра пӗр соединени чаҫӗсем тӑшмана ҫав терӗ хӑвӑрт пырса ҫапнӑ та Тисса шывӗн куккӑрине хӗстерсе лартнӑ. Нимӗҫсемпе венгерсен пӗр-пӗринчен татӑлса кайнӑ ушкӑнӗсене, шыв хӗррине хӗстерсе лартса, пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ытти чаҫсем 15 километр малалла кайнӑ та ҫулсен узелне Киш-Варда ялне туртса илнӗ. Ньиредьхаза хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсем хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе тӑкса, малалла куҫнӑ. Тедель чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Унти ҫапӑҫусенче нимӗҫсемпе венгерсен пӗр пин салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн 16 танкне ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ, 20 тупӑ ытла, боеприпас склачӗ тата 2 горючи склачӗ тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Будапешт хули енче Тисса шывӗпе Дунай шывӗ хушшинче пирӗн ҫарсем, тӑшманна ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Венгерсен Кечкемет ятлӑ пысӑк хулишӗн вӑйлӑ ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Пирӗн ӗнер каҫхине ҫав хулана вӑркӑнса кӗнӗ танкистсемпе пехотинецсене тӑшман питӗ вӑйлӑ хирӗҫ тӑнӑ. Вӑл ҫав хулари гарнизона пулӑшма нимӗҫсен 20-мӗш танковӑй дивизине янӑ. Нимӗҫсем кун каҫиччен 20 хут та ытла контратака тунӑ. Пирӗн ҫарсем тӑшманӑн пур контратакисене те сирсе янӑ та паян ирхине ирех Кечкемет хулине пӗтӗмӗшпех йышӑннӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсемпе венгерсен 2.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн 40 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. Трофейсем нумай тытса илнӗ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, совет чаҫӗсем Лайошмиже ялне туртса илнӗ. Ку ял Венгри столицинчен Будапешт хулинчен 55 километрта ларать. Дунай шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗррипе наступлени туса пыракан пӗр соединени чаҫӗсем 20 километр малалла кайнӑ. Кечель ялӗнче тӑшманӑн 300 ҫынтан тӑракан гарнизонне ҫавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пултуск хулинчен кӑнтӑртарахра, Нарев шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринче, нимӗҫ пехотин икӗ баталонӗ, танксем пулӑшнипе ҫӗрле пирӗн позицисене атакӑланӑ. Хаяр ҫапӑҫу пуҫланса кайнӑ, нимӗҫсене каялла хӑваласа янӑ. Тӑшман ҫӗнӗрен атакӑсем пуҫласа янӑ, анчах та нимӗнле ҫитӗнӳ те тӑвайман. Ирхине ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 300 виллине ытла шута илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн карапӗсем нимӗҫсен икӗ транспортне шыва путарнӑ.

* * *

Юлашки вӑхӑтра нимӗҫ хаҫачӗсемпе радиостанцийӗсем ҫавтери тӑрӑшса, хӑйсем туртса кӑларнӑ киревсӗр хыпарсене сараҫҫӗ. Ҫав хыпарсем тӑрӑх, совет ҫарӗсем Балтика тӑрӑхӗнче, Трансильванире, Хӗвелтухӑҫ Пруссире тата ытти районсенче те тискер ӗҫсем тӑваҫҫӗ пулать. Ҫавӑн пек киревсӗр ултавпа усал элек пулӑшнипе гитлеровецсем пӗр шанчӑксӑр лару-тӑрӑва кӗрсе ӳкнӗ Германи салтакӗсене тата гражданла халӑха усӑсӑр вӑрҫӑра малалла вӑрҫтарасшӑн.

Фашистла ирсӗрсен ҫав киревсӗр майӗсене тахҫанах тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, ун ҫинчен пурте лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ. Вӑрҫӑ пуҫлансанах 1941 ҫулхи июлӗн 8-мӗшӗнче Совет Информаци Бюровӗ нимӗҫ офицерӗ каласа панине пичетленӗччӗ.

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

## Информациллӗ пӗлтерӳ

Ҫак кунсенче ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн черетлӗ XX-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум ҫак ыйтусене пӑхса тухрӗ:

1. Ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсемпе 1945 ҫулхи ҫуракине хатӗрленес задачӑсем ҫинчен. (Чӑваш АССР Совнарком Председателӗн МАТВЕЕВ юлташӑн доклачӗ).

2. Чӑваш парторганизацийӗнче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫ тата идеологи ӗҫӗ мӗнле тӑни ҫинчен тата ҫав ӗҫсене лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен. (ВКП(б) Чӑваш Обком Секретарӗн ЧАРЫКОВ юлташӑн доклачӗ).

3. ВКП(б) Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗ «Колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен йышне сыхласа хӑвармалли тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малалла аталантармалли мероприятисем ҫинчен» йышӑннӑ решение Элӗкпе Тӑвай районӗсенче мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пыни ҫинчен. (ВКП(б) Элӗк райком секретарӗн ФЕДОТОВ юлташӑн тата ВКП(б) Тӑвай райком секретарӗн МОЛОСТВОВ юлташӑн доклачӗсем).

Сӳтсе-явнӑ пур ыйтусем тӑрӑх та пленум тивӗҫлӗ решенисем йышӑнса хӑварчӗ.

Пленум организациллӗ ыйтусем сӳтсе-яврӗ: Т. А. АХАЗОВ юлташа ВКП(б) Обкомӗн иккӗмӗш секретарӗ пулса ӗҫлеме ҫирӗплетрӗ тата ӑна Обком бюровӗн членне кӗртрӗ, ҫав ӗҫрен Н. И. Белков юлташа хӑтарчӗ. Пленум «Красная Чувашия» хаҫатӑн ответлӑ редакторӗ пулса ӗҫлеме С. В. КАРТАШОВ юлташа ҫирӗплетрӗ.

Пленум ҫавӑн пекех ВКП(б) Обкомӗн ялхуҫалӑх отделӗн заведующийӗ пулса ӗҫлеме Г. М. ГУСЕВ юлташа; шкулсен отделӗн заведующийӗ пулса ӗҫлеме А. М. ШАЛФЕЕВА юлташа; ҫарӗҫ отделӗн заведующийӗ пулса ӗҫлеме Н. П. ЕНЧИКОВ юлташа; ВКП(б) Обкомӗн кадрсен отделӗн заведующийӗн заместителӗ пулса ӗҫлеме Ф. П. РОМАНОВ юлташа; пропагандӑпа агитаци отдел заведующийӗн заместителӗ пулса ӗҫлеме А. С. ЕРЛАКОВ юлташа ҫирӗплетрӗ.

ВКП(б) ЧӐВАШ ОБКОМӖ.

## Ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсемпе килес ҫуракине хатӗрленес задачӑсем

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XX-мӗш пленумӗ «Ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсемпе 1945 ҫулхи ҫуракине хатӗрленес задачӑсем ҫинчен» республика Совнаркомӗн председателӗ Матвеев юлташ тунӑ доклада сӳтсе-яврӗ.

Чӑваш республикинчи колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем, вӑрҫӑпа ҫыхӑннӑ йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн туса ирттерчӗҫ, уйхир ӗҫӗсен пахалӑхне чылай лайӑхлатрӗҫ, ҫапла вара тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли плансене вӑхӑтра тултарма пултарчӗҫ. Тухӑҫлӑ тырпул туса илни колхозсене вӑрлӑх фончӗсене пӗтӗмӗшпех хывса хӑварма, колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх тӗштырӑсемпе ытти тӗрлӗ ҫимӗҫсем ытларах валеҫсе пама май кӳрет.

Паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланнӑ колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсен работникӗсем, фронта пур енӗпе те ытларах пулӑшас тесе, тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте, государство валли тырӑпа ытти тӗрлӗ ҫимӗҫсем турттарнӑ ҫӗрте вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫлерӗҫ. Государствӑна тырӑ срокчен парса татассишӗн, Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе тырӑ парассишӗн пыракан Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура республикӑри колхозсем хӑйсем илнӗ обязательствӑсене пӗтӗмӗшпех пурнӑҫларӗҫ. Планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне 500 пин пӑт тырӑ пачӗ.

Кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса ирттерес, тырпул хатӗрлемелли плана тултарас тӗлӗшпе Вӑрнар, Шупашкар, Чурачӑк, Красноармейски, Ҫӗрпӳ, Калинино тата ытти хӑшпӗр районсем уйрӑмах ӑнӑҫлӑ ӗҫлерӗҫ.

Республикӑри МТС-сем те пӗлтӗрхинчен чылай лайӑхрах ӗҫлесе пычӗҫ. Вӑрнар, Йӗпреҫ, Шӑхасан, Комсомольски, Елчӗк МТС-сем, ҫавӑн пекех тата иртнӗ ҫулсенче кая юлса пынӑ Ҫӗрпӳ, Куславкка, Чкаловски МТС-сем трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне ӑнӑҫлӑн тултарчӗҫ.

Ҫакӑнпа пӗрлех парти Обкомӗн пленумӗ Кувакино, Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Первомайски районсенчи партипе совет тата ҫӗрӗҫ органӗсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса ирттерес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленине, ҫав районсем государство умӗнчи хӑйсен обязательствисене пурнӑҫа кӗртменнине палӑртса хӑварчӗ.

Уйрӑм районсем авӑн ҫапас тата нумай ҫул ӳсекен курӑксен вӑрлӑхӗсене ҫапса шӗкӗлчес ӗҫсене вӑраха ячӗҫ. Октябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне республикипе 39 пин гектар ҫинчи тырра ҫапса пӗтермен. Авӑн ҫапас тӗлӗшпе Тӑвай, Улатӑр, Етӗрне, Комсомольски районсенчи колхозсем уйрӑмах япӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Хӑшпӗр районсем кӗрхи ҫӗртме тумалли плана тултарассишӗн ҫине тӑрса ӗҫлемерӗҫ, ҫапла вара вӗсем килес ҫуракине ирттерес тата тухӑҫлӑ ҫуртырри туса илес ӗҫре хӑйсем валли ҫӗнӗ йывӑрлӑхсем туса хучӗҫ.

Уйхир ӗҫӗсемпе авӑн ҫапас ӗҫсене вӗҫлесе пынӑ май колхозсемпе МТС-сен ҫийӗнчех килес ҫуракине хатӗрленме тытӑнмалла пулнӑ. Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, райисполкомсемпе парти райкомӗсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫе хӑвӑртрах пуҫӑнма тӑрӑшман. Ҫакна Обком пленумӗ пачах та тӳсме ҫук тесе шутлать.

Ку ҫитменлӗхе палӑртса, парти Обкомӗн пленумӗ республикӑри парторганизацисем умне 1945 ҫулта пурнӑҫа кӗртме тырпул тухӑҫлӑхне пур майсемпе те малалла ӳстерес, тӗштырӑпа ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх продукчӗсене ытах та ытларах пухса кӗртес тӗп задача лартрӗ. Ҫав задачӑна пурнӑҫа кӗртме колхозсемпе МТС-сенчи тата совхозсенчи мӗнпур вӑйсемпе майсене мобилизацилемелле, ҫуракине вӑхӑтра та тӗплӗн хатӗрленсе ҫитмелле.

Парти райкомӗсемпе райисполкомсен тата ҫӗрӗҫ органӗсен колхозсенче вӑрлӑх фончӗсене хӑвӑртрах хывас, вӑрлӑхсене ҫуракине хатӗрлесе ҫитерес тӗлӗшпе халех тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла. Вӑрлӑх фончӗсем хывас ӗҫе кашни колхозра ноябрӗн 15-мӗшӗччен, вӑрлӑхсене тасатса сортлас тата лабораторисенче малтанхи хут тӗрӗслеттерес ӗҫсене январӗн 1-мӗшӗччен туса ӗлкӗрмелле. Вӑрлӑх участокӗсене акса хӑвармалли вӑрлӑхсене суйласа илсе, вӗсене акана тӗплӗн хатӗрлесе ҫитерес ӗҫ ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла, сортлӑ вӑрлӑхсене госсортфонд склачӗсенчен вӑхӑтра турттарса тухмалла, ку енӗпе колхозсенчи шалти ресурссемпе усӑ курма тӑрӑшмалла, вӑрлӑха тӗплӗн сортласа, алӑпа суйласа хурас ӗҫе йӗркелемелле.

Колхозсемпе совхозсенче вӑрлӑх фончӗсене мӗнле упраса усранине, вӑрлӑхсен пахалӑхне парти райкомӗсемпе райисполкомсен ҫивӗччӗн контроллесе тӑрас пулать, вӑрлӑха пӑсакансене, салатса пӗтерекенсене ҫирӗп ответ тыттарас пулать.

Вӑрлӑхсене чӳхесе тасатма Наркомземӑн республикӑна кирлӗ таран химикатсем кӳрсе килмелле, вӗсене районсемпе колхозсене вӑхӑтра ҫитермелле.

Обком пленумӗ Чӑваш АССР Наркомземне, парти райкомӗсемпе райисполкомсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене пахалӑхлӑн та тӗплӗн юсаса хатӗрлессине пурнӑҫа кӗртме хушса хӑварчӗ. Кашни машинӑна юсаса кӑларас тӗлӗшпе ҫирӗп график тумалла. Машинӑсемпе ытти ӗҫ хатӗрӗсене юсанӑ ҫӗре халех мӗнпур тимӗрҫӗсемпе машиноведсене, ремонт ӗҫӗнче ӗҫлекен рабочисене явӑҫтарас пулать. Уйхир ӗҫӗсенчен пушаннӑ е пушанакан машинӑсемпе инвентарь трактор бригадисенчен, трактористсемпе комбайнерсенчен, машиноведсенчен, — МТС-семпе совхозсен директорӗсем е старши механиксем, колхозсене вара бригадирсемпе колхозниксенчен — колхоз председателӗсем обязательнӑй йӗркепе акт тӑрӑх йышӑнма тивӗҫлӗ.

Парти Обкомӗн пленумӗ республикӑри промышленность предприятийӗсен руководителӗсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем туса хатӗрлемелли, киввисене юсаса ҫӗнетмелли плана пӗр сӑмахсӑрах пурнӑҫа кӗртме хушса хӑварчӗ.

Парти райкомӗсемпе райисполкомсен колхозсенчи тимӗрҫӗ лаҫҫисене юсас ӗҫре пулӑшас пулать. Тимӗрҫӗсем ҫук колхозсене ялхуҫалӑх машинисене юсама тимӗрҫӗсем пур колхозсем ҫумне ҫирӗплетсе тухмалла, ҫав тимӗрҫӗсене ӗҫшӗн тӳлессине йӗркелемелле, ҫамрӑксене тимӗрҫӗ вӗрентессине организацилемелле.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫре лашасене пӑхасси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Партин нумай райкомӗсемпе райисполкомсем тата ҫӗрӗҫ органӗсем лашасен йышне ӳстерес, вӗсене пӑхса усрас ӗҫ ҫине пачах та ҫителӗксӗр ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Лашасене пӑхса усрас тата вӗсемпе усӑ курас ӗҫри обезличкӑна халех пӗтермелле, ҫак ӗҫре партипе совет тата ҫӗрӗҫ органӗсем енчен ҫирӗп контроль кирлӗ. Пирӗн кашни лашана упрамалла, лашасен йышне малалла ӳстерсе пымалла. Колхозсенчи ӗҫе ҫӑмӑллатас тесен, хӗллехи тапхӑрта майракаллӑ шултӑра выльӑхсене кӳлсе ҫӳреме йышлӑнрах вӗрентес пулать.

Республикӑри нумай колхозсенче кӳлмелли хатӗрсем (ҫуна-урапасем, сӑсменхӑмӑтсем т. ыт. те) ҫителӗксӗр. Урапаҫунасем тата ытти кӳлмелли хатӗрсем тума кашни колхозрах платниксемпе шорниксем уйӑрса лартмалла. Наркомлес, ырӑнти промышленность тата промкооперации предприятийӗсенче колхозсемпе совхозсен валли транспорт хатӗрӗсем туса кӑларас ӗҫе вӑйлатас пулать.

Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес ӗҫре вырӑнти удобренисем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине шута илсе, парти Обкомӗн пленумӗ Наркомзема, райисполкомсемпе парти райкомӗсене колхозсемпе совхозсенче уйхире тислӗк, торф, ҫӗрӗк тӑпри турттарас, ҫавӑн пекех тата кӗлпе кайӑк-кӗшӗк тислӗкне пухас ӗҫе анлӑн организацилеме хушса хӑварчӗ. Ҫав удобренисене чи малтан паха тырпул (тулӑ, техникӑллӑ, культурӑсем, ҫӗрулми) акмалли ҫӗрсем ҫине турттармалла.

Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн, райисполкомсемпе парти райкомӗсен колхозсемпе совхозсенчи пусуҫаврӑнӑшӗсене тӗрӗслесе тухас пулать, ҫак ӗҫе агрономсене явӑҫтарса, тӗрлӗ культурӑсене пусуҫаврӑнӑшӗн уйхирӗсенче тӗрӗс вырнаҫтарса тухмалла. Ҫавӑнпа пӗрлех уйрӑм культурӑсем тата пусуҫаврӑнӑшӗн кашни уйрӑм участокӗсем тӑрӑх агротехника мероприятийӗсене палӑртса хумалла.

Пленум парти райкомӗсемпе райисполкомсене тата ҫӗрӗҫ органӗсене колхозсенчи уйхир бригадисене ҫирӗплетме хушса хӑварчӗ. Бригадӑсене халех ӗҫ лашисем, ялхуҫалӑх машинисемпе инвентарь уйӑрса памалла, бригадӑсенче вара ҫак ӗҫ хатӗрӗсене уйрӑм колхозниксем ҫумне ҫирӗплетсе хумалла. Уйхир бригадисенчех яланлӑх ӗҫлеме звеносем организацилемелле, ӗҫ нормисене, ӗҫшӗн тӳлемелли хаксене пӑхса тухса колхозниксен пухӑвӗсенче ҫирӗплетес пулать. 1945 ҫулхи февралӗн 1-мӗшӗччен колхозсен производство планӗсене туса, заданисене бригадӑсемпе звеносем патне ҫитермелле. Мартӑн 1-мӗшӗччен яровизаторсемпе химизаторсене, акакансемпе сухаҫӑсене, звеноводсене курссем урлӑ вӗрентсе кӑларас пулать.

Механизаторла кадрсене — трактористсемпе комбайнерсене тата вӗсен помощникӗсене вӗрентсе хатӗрлес ӗҫ ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла. Колхозсенче агротехникӑна массӑллӑн вӗрентес ӗҫе организацилемелле. Колхоз председателӗсемпе бригадирсен, счетоводсен пӗлӳлӗхне ӳстерес тӗлӗшпе те ҫине тӑрса ӗҫлес пулать.

Обком пленумӗ парти райкомӗсемпе райисполкомсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене 1944-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсене хӑйсен ларӑвӗсенче, колхозсемпе МТС-сенче тата совхозсенче — колхозниксен, рабочисемпе служащисен пухӑвӗсенче сӳтсе-явса, кашни колхоз, бригадӑпа звено мӗнле ӗҫленине хак пама, ӗҫри мӗнпур ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсене уҫҫӑн палӑртма, ҫапла вара ҫуракине ӑнӑҫлӑн та тӗплӗн хатӗрленсе ҫитес тӗлӗшпе татӑклӑ ӗҫсем палӑртса хума хушса хӑварчӗ.

Республикӑри Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн, парти райкомӗсен агротехника мероприятийӗсене пурнӑҫа кӗртес, колхозсенче тӗрӗс пусуҫаврӑнӑшӗсем туса йӗркелес, сортлӑ вӑрлӑхсем акса тӑвассине лайӑхлатас, тырпул тухӑҫлӑхне малалла ӳстерсе пырас ӗҫре ҫӗрӗҫ органӗсемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсен ответлӑхне, вӗсен организаторла вырӑнне ӳстерессишӗн тӑрӑшмалла.

Ҫуракине хатӗрленес задачӑсем мӗнпур парторганизацисене колхозниксем хушшинчи, МТС-семпе совхозсен работникӗсем хушшинчи массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе тӗпренех лайӑхлатма, колхозсене куллен оперативлӑн ертсе пыма хушаҫҫӗ. Партипе комсомолӑн колхозсенчи организацийӗсене пур енӗпе те тӗреклетмелле, вӗсен колхоз производствине ертсе пырас ӗҫри вырӑнне ӳстермелле.

ВКП(б) Обкомӗн XX-мӗш пленумӗ мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсен работникӗсене ҫуракине ӑнӑҫлӑн хатӗрленсе ҫитессишӗн, ҫӗршыва фронта апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа — чӗртавар ытларах парас тесе, тырпулпа выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫне малалла ӳстерсе пырассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарса яма чӗнчӗ.

Республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсен работникӗсем парторганизаци чӗннине чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗҫ.

## Чӑваш АССР-ӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсен обязательствисем

### *Государствӑна ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ памалли плана ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫа кӗртмелле тата ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 12.000 тонна ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ памалла*

Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар Хӗвелтухӑҫ Пруссие кӗрсе кайрӗ. Пирӗн Тӑван ҫӗршыв савӑнӑҫлӑ та асран кайми кунсене пурӑнса ирттерет.

Эпир, Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсем, Хӗрлӗ Ҫар Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче тунӑ историллӗ ҫӗнтерӳсемпе хавхаланса, Украина колхозникӗсем чӗнсе каланипе, государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарассишӗн Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнтӑмӑр. Илнӗ обязательствӑсене эпир чыслӑн пурнӑҫа кӗртрӗмӗр.

Республикӑри колхозсемпе совхозсем государствӑна тырӑ памалли тата МТС-сем ӗҫленӗшӗн натуроплата тӳлемелли плана обязательствӑра илнӗ срокчен 5 кун малтан, октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне, пурнӑҫларӗҫ. Обязательствӑпа палӑртнӑ срокра — октябрӗн 25-мӗшӗнче — Хӗрлӗ Ҫар фондне валли планран ирттерсе 500.000 пӑт тырӑ хатӗрлев пункчӗсене леҫсе патӑмӑр. Государствӑна ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ памалли плана пурнӑҫа кӗртсе пыратпӑр.

Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсем, Ярославль облаҫӗнчи колхозниксем Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ пама чӗнсе каланине ырласа, ҫакӑн пек обязательствӑсем йышӑнаҫҫӗ:

1. Государствӑна ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ памалли плана палӑртнӑ срок тӗлне тултармалла.

2. Ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 12.000 тонна ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ памалла.

Хамӑр илнӗ обязательствӑсене палӑртнӑ срокра пурнӑҫа кӗртессишӗн мӗнпур вӑя хурса ӗҫлетпӗр, ҫапла вара фашистла тискер кайӑка хӑйӗн йӑвинчех пӗтерсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшатпӑр.

Сывӑ пултӑр пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар!

Сывӑ пултӑр Сталин юлташ!

(Обязательствӑсене республикӑри колхозсенчи пухусенче йышӑннӑ).

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## НОЯБРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Çав офицер çапла каласа кăтартнă. Германи Совет Союзне тапăниччен нумай малтанах нимĕç гестаповецĕсем «большевиксем тунă ирсĕр ĕçсем» тесе темĕн чухлĕ фотокарточкăсем хатĕрлесе хунă. Вара вăрçă вăхăтĕнче гитлеровецсем çав суя карточкăсемпе усă курнă тата çĕнĕрен темĕн чухлĕ суя документсем туса хатĕрленĕ, халĕ те тăваççĕ. Çак тĕлĕшпе Белоруссири 3-мĕш фронтра çак кунсенче тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем каласа кăтартни паллă выран йышăнать. Хĕвелтухăç Пруссири 1-мĕш дивизири 43-мĕш пехотнăй полкран тыткăна лекнĕ ефрейтор Петер Фенбонг çапла каласа кăтартнă: «Октябрь уйăхĕ варринче гестаповецсем кинофильм ÿкерме тытăнчĕç. Çав кинофильм вырăс çарĕсем Хĕвелтухăç Пруссире тискер ĕçсем тунă пек кăтартмалла пулнă, красноармеецсен формине тăхăннă нимĕçсем чÿречесене ватаççĕ, пÿртри сĕтелсене, шкафсене çĕмĕреççĕ, выльăх-чĕрлĕхе пусаççĕ, çуртсене вут тĕрте-тĕрте яраççĕ. Вара çакна пурне те фильм çине ÿкернĕ. Çак фильма часах кăтартма пуçлаççĕ. Фильм ÿкерекенсем çапла каларĕç: Геббельс питĕваскатать, вăл ку фильма экрансем çине хăвăртрах каларса яма хушать». 561-мĕш пехотнăй дивизири 1141-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ нимĕç обер-ефрейторĕ Герберт Штоббе çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ хам куçпах çакна куртăм: Хĕвелтухăç Пруссирен куçса кайма килĕшменнисене (ун пеккисем пуринчен ытла Ленинград облаçĕнчен, Эстонирен, Латвирен тата Литваран хăваласа килнĕ совет çыннисемччĕ) гестаповецсем çавăнтах пере-пере пăрахрĕç. Персе пăрахнă хĕрарăмсен тата старикесен виллисене кино валли ÿкере-ÿкере илчĕç».

Çак майпа ĕнтĕ гитлеровецсем «Совет çарĕсем Хĕвелтухăç Пруссире тискер ĕçсем туни» çинчен кинора кăтартмалли фильма ÿкереççĕ.

Гитлеровецсем саракан ирсĕр элек паттăр Хĕрлĕ Çарăн чысне варалайрас çук. Хăйсене хăйсем килĕшÿллĕ лайăх тытнă пирки совет воинĕсене Румыни, Польша, Болгари, Çурçĕр Трансильвани, Югослави, Венгри, Норвеги, Чехословаки хулисемпе ялĕсенчи халăх кăмăлласа хисеплет. Совет боецĕсемпе офицерĕсем хăйсем йышăннă вырăнсенче хăйсене хăйсем çавăн пек лайăх тыткаланине халĕ пурте пĕлеççĕ. Нимĕç жуликĕсем çав пуриншĕн те паллă чăнлăха нимле суя хыпарсем сарса та варалаймĕç. Катыньре, Бабий Ярта, Майданекра ирсĕрленнĕ Гитлер палачĕсене никам та ĕненес çук. Нимĕçсем оккупациленĕ пур çĕршывсенчи халăх та хăйне фашистла нимĕçсен чуралăхĕнчен хăтаракан Хĕрлĕ Çара савăнса кĕтсе илет.

## Октябрь уявне хатĕрленеççĕ

Улатăрти 5-мĕш номерлĕ вăтам шкулти пионерсем Октябрь уявĕ ячĕпе пулса иртекен чаплă сбора хатĕрленеççĕ. Çак кун дружинăри чи лайăх пионерсем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕреççĕ. Халĕ вĕсене комсомолăн программипе тата уставĕпе паллаштараççĕ. Уяв кунĕ тĕлне комсомол комитечĕпе пионерсен дружинин штабĕ пысăк альбом хатĕрлеççĕ. Вăл альбомра ача чух ку шкулта вĕреннĕ, халĕ Совет Союзĕн Геройĕсем А. Кочетов, В. Ветвинский, Зоя Парфенова тата Совет Союзĕн Верховный Совет депутачĕ А. Моисеева юлташсен пурнăçĕпе чаплă ĕçĕсене кăтартакан ÿкерчĕксем пулаççĕ.

### ДЖАМБУЛРИ РАФИНАД ЗАВОЧĔ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНĂ

Джамбулри (Казахстан) рафинад завочĕн малтан хута ямалли пайĕ ĕçлеме пуçланă. Темиçе вунă центнер сахăр туса кăларнă ĕнтĕ. (ТАСС).

# Хĕрлĕ Çар фондне—çĕрулмипе пахча-çимĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене сывăх кунсенчех вĕçлесе çитерĕççĕ. Паянхи кун тĕлне çапса пуçтармалли 400 гектар çинчи тырă çеç юлнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем, Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç пама чĕнсе калантине йышăнса, хăйсем илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне пурĕ 550 тонна çĕрулми пама пулнă. Вăл хисепрен 300 тоннине хатĕрлев пунктне леçсе панă ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулми леçес ĕç «Красная Звезда», «Красный Восток», «Победа» тата ытти колхозсенче ăнăçлăн пырать. Вĕсем хăйсен обязательствине сывăх кунсенчех пурнăçа кĕртеççĕ.

С. ШАДИН.

* * *

МУРКАШ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хатĕрлев пунктне турттарасси пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Юлашки кунсенче хатĕрлев пунктне Доронин ячĕпе тăракан колхоз 420 пăт, «Свобода» колхоз 700 пăт, «Авангард» колхоз 500 пăт тата ытти нумай колхозсем çĕршер пăт леçсе панă.

Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 700 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулнă. Ку таранччен 300 тоннине хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Ф. МАЛЫШКИН.

* * *

ЧУРАЧĂК, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенчен хатĕрлев пунктне çĕрулмипе пахча-çимĕç леçекен лавсен йышĕ кунсеренех ÿссе пырать. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем кунне икшер хут кайса килеççĕ. Янчеллă ялсоветĕнчи «Новая сила», «Прогресс», «Победа», Шуркасси ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, «Большевик» тата ытти чылай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне памалли çĕрулмине пĕтĕмпех турттарса пĕтерне.

Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă 36.000 пăт çĕрулмине Октябрь уявĕччен пĕтĕмпех леçсе пĕтерессишĕн тăрăшаççĕ.

МИТРОФАНОВ,
ВКП(б) райком секретарĕ.

# Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейи

## Сакăр кунхи итогсем

Республикăри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене 1944 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 41.707 пин тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран билет укçине 24.771 пин тенкĕ хывнă.

Республикăри чылай районсем лотерея билечĕсене сарас тата билет укçине пухас ĕçе пĕтĕмпех вĕçленĕ. Вĕсен шутне Октябрьски, Вăрмар, Тăвай, Канаш районĕсем кĕреççĕ. Шупашкар, Шăхасан, Чурачăк, Чкаловски, Çĕмĕрле, Сĕнтĕр, Советски, Пăрачкав районĕсем билетсене вырнаçтарса пĕтерне.

Лотерея билечĕсене сарас тата билет укçине пухас тĕлĕшпе Элĕк, Кувакино, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсем юлса пыраççĕ.

### *Колхозниксем лотерея билечĕсемшĕн укçа çиййĕнчех тÿлеççĕ*

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерея билечĕсене колхозниксем питĕ нумай илеççĕ. Билетсемшĕн тÿлемелли укçан пысăк пайне çийĕнчех тÿлеççĕ. Çапла, Грузин ССР-ĕнчи колхозниксем 100 миллион тенкĕ ытла тÿленĕ, Таджик ССР-ĕнчи колхозниксем — 43 миллион тенкĕ, Киргиз ССР-ĕнчи колхозниксем 46 миллион тенкĕ тÿленĕ. Мускав облаçĕнчи колхозниксем 60 миллион тенкĕ ытла тÿленĕ. (ТАСС).

### Лотерея билечĕсем çине пысăк вылявсем тухнă

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кăçалхи февралĕн 15-мĕшĕнче ССР Союзĕн Наркомфинĕ укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин вылявне иртерчĕ. Çавăн чухне районри ĕççыннисем лотерея билечĕсемпе пысăк вылявсем илнĕ. 25 тенкĕлĕх лотерея билечĕсемпе икĕ çын 5.000 тенкĕ укçа тата нумайĕшĕсем тĕрлĕ япаласем выляса илнĕ. Килейкассинчи А. Алексеев колхозник 4,5 метр çăм сукна, Октябрьскинчи вăтам шкулта вĕренекен Коржанов 900 тенкĕ тăракан кĕмĕл портсигар выляса илнĕ. Районри перекет касси лотерея вылявĕсем тăрăх пĕтĕмпе 99.000 тенкĕ ытла укçан тÿленĕ.

(«Хĕрлĕ Октябрь»).

### *„Ача амăшĕ—героиня" ятлă орденсем тата „Ача амăшĕ—героиня" тенĕ хисеплĕ ят пани çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕн грамотисене пани*

Ĕнер, ноябрĕн 1-мĕшĕнче, Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ 10 ача тата ытларах та çуратса пăхса ÿстернĕ хĕрарăмсен пĕр ушкăнне «Ача амăшĕ — героиня» ятлă орденсем тата «Ача амăшĕ — героиня» тенĕ хисеплĕ ят пани çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕн грамотисене панă.

«Ача амăшĕ — героиня» ятлă ордена тата «Ача амăшĕ—героиня» тенĕ хисеплĕ ят пани çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕн грамотисене çаксене панă: А. С. Алексахинăна — Мускав облаçĕнчи Пушкино районĕнчи Мамонтовка поселокĕнче пурăнакан килхуçи хĕрарăмне; М. П. Аркадьевăна — Ленинград облаçĕнчи Тихвин районĕнчи Бокситогорск поселокĕнче пурăнакан килхуçи хĕрарăмне; В. Г. Асадуллинăна — Пушкăрт АССР-ĕнчи Чишма районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна; А. М. Белоусовăна — Мускав облаçĕнчи Коломна районĕнчи Подберезниково колхозĕнчи колхозницăна; Т. С. Бубновăна — Свердловск облаçĕнчи Верхне-Пышмински районри торфоснаб столовăйĕнче ĕçлекен работницăна; С. В. Игнатьевăна — Ленинградра пурăнакан килхуçи хĕрарăмне; А. С. Кирилинăна — Калинин облаçĕнчи Новоторжок районĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозри колхозницăна; М. М. Рыжковăна —Тула хулинчи килхуçи хĕрарăмне; М. Е. Смагинăна — Мускав хулинчи Киров районĕнче пурăнакан килхуçи хĕрарăмне тата Е. П. Солдатовăна — Горький облаçĕнчи Шатки районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ çав ача амăшĕсене аслă наград илнĕ май ăшă кăмăлпа саламланă; тата вĕсене сывлăхпа вăй суннă, çав наградăсене вĕсене правительство хăйсен ачисене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе питĕ нумай ĕçленĕшĕн панă.

Ача амăшĕ — героиньăсем Калинин юлташран вĕсем ача амăшĕсемшĕн хытă тăрăшнăшăн Сталин юлташа тав туни çинчен тата ăна сывлăх сунни çинчен пĕлтерме ыйтнă. (ТАСС).

## ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТĂ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ 1944 ÇУЛХИ ТĂВАТТĂМĔШ КВАРТАЛТИ ПЛАНА ОКТЯБРĔН 31-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

| Районсем | Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе | Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе | Мĕнле вырăн йышăнать: Турттарас енĕпе | Мĕнле вырăн йышăнать: Хатĕрлес енĕпе |
|---|---|---|---|---|
| Куславкка | 60,0 | 46,6 | 1 | 1 |
| Йĕпреç | 40,0 | 44,4 | 2 | 3 |
| Октябрьски | 29,1 | 40,5 | 3 | 10 |
| Первомайски | 33,0 | 37,5 | 4 | 8 |
| Шăхасан | 37,8 | 37,3 | 5 | 6 |
| Елчĕк | 38,3 | 31,6 | 6 | 5 |
| Элĕк | 18,0 | 31,0 | 7 | 19 |
| Красноармейски | 45,7 | 30,0 | 8 | 2 |
| Шупашкар | 40,0 | 30,0 | 9 | 4 |
| Пăрачкав | 13,0 | 30,0 | 10 | 23 |
| Комсомольски | 30,0 | 28,5 | 11 | 9 |
| Калинино | 23,0 | 25,7 | 12 | 15 |
| Канаш | 14,3 | 25,0 | 13 | 21 |
| Вăрмар | 14,0 | 23,0 | 14 | 22 |
| Вăрнар | 9,6 | 22,2 | 15 | 26 |
| Етĕрне | 11,4 | 21,4 | 16 | 25 |
| Чкаловски | 35,0 | 20,1 | 17 | 7 |
| Тăвай | 19,1 | 19,4 | 18 | 18 |
| Сĕнтĕр | 15,0 | 18,0 | 19 | 20 |
| Чурачăк | 19,6 | 17,3 | 20 | 16 |
| Советски | 9,0 | 16,9 | 21 | 27 |
| Çĕрпÿ | 19,2 | 16,3 | 22 | 17 |
| Çĕмĕрле | 26,0 | 16,0 | 23 | 11 |
| Муркаш | 12,8 | 15,3 | 24 | 24 |
| Кувакино | 25,0 | 11,0 | 25 | 12 |
| Хĕрлĕ Чутай | 24,0 | 10,0 | 26 | 13 |
| Сĕнтĕрвăрри | 24,0 | 9,0 | 27 | 14 |
| Ишлей | 8,3 | 4,6 | 28 | 28 |

### Чугун çул валли вутă хатĕрлемелли октябрьти плана срокчен тултарнă

Алтышевăри вăрманпромхоз чугун çул валли вутă хатĕрлемелли октябрь уйăхĕнчи плана срокчен ирттерсе пурнăçа кĕртрĕ. Пĕтĕмпе 4.000 кубометр хатĕрлесе турттармалла пулнă пулсан, октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне 4044 кубометр хатĕрлесе, 4021 кубометр турттарнă. Вăрманпромхоз коллективĕ çак çитĕнĕве уяв умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса пынипе тунă.

Вутă хатĕрленĕ çĕрте Елчĕк районĕнчи колхозниксем лайăх ĕçленĕ. Вĕсем плана икĕ хут ирттерсе тултарнă.

Халĕ вăрманпромхоз коллективĕ планран ирттерсе вутă хатĕрлет.

Вăрманпромхоз директорĕ НАУМОВ.
Парторг СЕМЕНОВ.

# Совет Союзĕ тăрăх

### КАЗАХСТАНРИ МЕТАЛЛУРГИ ЗАВОЧĔ

Караганда хулинчен 35 километрта металлурги завочĕ тăваççĕ. Мартен цехĕн тĕп корпусĕнче икĕ кăмакана майлаштарса лартнă ĕнтĕ. Халĕ çав кăмакасенчен пĕрин механизмĕсене тĕрĕслесе пăхаççĕ. Заводăн темиçе цехне туса пĕтерне, вĕсенчен пĕр пайĕ ĕçлеме пуçланă. Чугун çул хывнă, вăл завода тĕп чугун çулпа çыхăнтарать. Çав завода пуринчен ытла казах колхозникĕсен вăйĕпе тăваççĕ.

Казахстан хурçинчен листасем тата ытти тĕрлĕ металл хатĕрлеççĕ. Завод Казах ССР-не металл çителĕклĕ парса тăрĕ.

(ТАСС).

### ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ 300.000 МĂШАР АТĂ-ПУШМАК

Ленинградри орденлă «Скороход» фабрикин коллективĕ Октябрь уявĕ умĕн илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырать. Октябрĕн 29-мĕшĕнче çулталăкри плана тултарнă. Октябрь уйăхĕнче январь уйăхĕнче туса кăларнинчен 2,5 хут ытларах продукци туса кăларнă. Ĕç тухăçлăхĕ 20 процент ÿснĕ.

Çулталăк пĕтиччен фабрика коллективĕ планран ирттерсе 300.000 мăшăра яхăн атă-пушмак туса парать. (ТАСС).

### ГЕКТАРТАН 316 ЦЕНТНЕР ÇĔРУЛМИПЕ ПАХЧА-ÇИМĔÇ ТУХНĂ

Мускавра пахчасенчи ĕçсен итогĕсене пăхса тухнă. Кăçал пахчасенче 1 миллион та 200 пин çын ытла ĕçленĕ. Пахчасен лаптăкĕ 18.400 гектартан та иртнĕ. Мускав çыннисем, вăтамран шутласан, кашни гектартан 143 центнер çĕрулми тата 173 центнер пахча-çимĕç туса илнĕ. (ТАСС).

# Болгари делегацийĕ Мускавран тухса кайни

Октябрĕн 31-мĕшĕнче Мускавран Болгари Правительствин делегацийĕ тухса кайнă. Вăл Мускавра Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен представителĕсемпе перемири тăвасси çинчен калаçнă тата перемири пирки тунă Килĕшĕве алă пуснă. Болгари правительствин делегацийĕнче çаксем пулнă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Петко Стайнов господин, портфельсĕр Министр Добри Терпешев господин, портфельсĕр Министр Никола Петков, Финанс Министрĕ Петко Стоянов, делегаци советникĕсем — профессор Дмитрий Михалчев, генерал-полковник Георгий Попов, полковник Иван Антонов, Анна Каменова тата делегаци секретарĕсем.

Мускав аэродромĕнче делегацие СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕ В. А. Зорин, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕн ĕçĕсене туса тăракан Г. И. Фомин тата Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăнусен отделĕн Начальникĕ М. П. Кутузов генерал-майор ăсатса янă.

# Черчилль Совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕсене йышăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи премьер-министрĕ У. Черчилль октябрĕн 30-мĕшĕнче Совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕсене йышăннă, çав делегаци вăл Англипе Совет Профсоюзĕсен Комитечĕн ларăвĕсенче пулнă.

### *Тито маршал Шубашичпа калаçни*

БЕЛГРАД, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). «Ирĕклĕ Югослави» ятлă радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, Иосип Броз-Тито маршал Югослави правительствин премьер-министрĕпе Шубашич докторпа тĕл пулса калаçнă. Вĕсем пĕрлешнĕ Югослави правительствине тăвасси çинчен калаçнă. Питĕ кăмăллăн сăмахланă, пĕр-пĕрне лайăх ăнланнă. Çĕнĕ правительство тума халех тытăнма йышăннă.

### БУХАРЕСТРА НАЦИЛЛĔ-ДЕМОКАТИЛЛĔ ФРОНТ ТУНĂ ДЕМОНСТРАЦИ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер каçхине Бухарестра нациллĕ-демократиллĕ фронтăн пысăк демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Столица урамĕсене 70.000 çынтан кая мар тухнă. Демонстраци 4 сехет ытла пынă.

Король дворецĕ умĕнче митингсем пулнă. Унта нациллĕ-демократиллĕ фронга кĕрекен партисемпе организацисен представителĕсем сăмах тухса каланă. Вĕсем хальхи правительствăна халех вырăнтан тухма хушнă тата халăх ыйтнине, нациллĕ-демократиллĕ фронтăн платформинче кăтартса панăскерне, пурнăçа кĕртме пултаракан çĕнĕ правительство тума ыйтнă.

### ФИНЛЯНДИРЕ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ ТЫТА-ТЫТА ХУПАÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндипе перемири пирки тунă Килĕшĕвĕн 13-мĕш статьинче вăрçă преступленийĕсемшĕн айăпланакан çынсене тытса чарас тата вĕсене суда парас ĕçре Финлянди союзлă çĕршывсемпе пĕрле ĕçлеме сăмах панă. Çав статьяна пурнăçа кĕртес шутпа Финлянди правительстви халĕ вăрçă преступникĕсем шутланакан 44 çынна тытса хупма хушнă. Финлянди влаçĕсем çав шутран 33 çынна тытса хупнă ĕнтĕ. Тытса хупнисем хушшинче çаксем пур: 8-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ Полоярви генерал-майор, 18-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ Пояри генерал-майор тата ыттисем те.

# Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Зейд-Бевеланд хули союзниксен аллинче. Октябрĕн 30-мĕшĕнче ирхине ирех Гус хулине тытса илнĕ. Союзниксен чугун çул тăрăх хĕвеланăçнелле каякан çарĕсем Вильхесена каякан чугун çул патне çитнĕ.

Шельда шывĕ патĕнче тăшман çарĕсене хупăрласа илнĕ районра тăшмантан пысăках мар çĕр тăрăхне тасатнă. Слейс районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Берген-оп-Зоом тата Розендааль секторĕнче союзниксен çарĕсем малалла кайнă.

Розендааль хулине тытса илнĕ. Союзниксем халь Стеенбергенран 3 мильăра тăраççĕ, Ауд Гастель районне çитнĕ. Бреда хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем пăртак малалла кайнă. Союзниксен çарĕсем Берген-оп-Зоом хулипе Бреда хули хушшинчи пĕтĕм çула пÿлсе тăраççĕ. Тильбюрх хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре анлă фронтпа наступлени туса пыраççĕ. Союзниксен Оостергаут хули хĕррине çитнĕ, унтан хĕвелтухăçнерехре Капелле хули таврашĕнче тăраççĕ.

Мезьер-ле-Мец хулине тăшмантан тасатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче Аахен хулинчен Люневиль хули патне çитиччен патрульсем кĕрешнĕ. Рамбервилье хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем пăртак малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи чаçсене пулăшса пынă тата тăшманăн Германири темиçе объектне тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Октябрĕн 31-мĕшĕнче Зейд-Бевеланд çурутравĕпе Вальхерен утравĕ хушшинчи чугун çул çинче кунĕпех йывăр çапăçусем пынă. Ауденбос хулипе Бреда хули хушшинчи районра союзниксен çарĕсем шыв хĕррине тухнă, вара Ауденбос хулинчен çурçĕртерехре тата Бреда хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Дордерехт патнелле каякан çулсен районĕнче шыв урлă каçса кайнă. Капелле хулинчен çурçĕртерехре союзниксем Маас шывĕ çине тухнă. Раамсдонк, Спранг тата Ваальвейк пункчĕсене туртса илнĕ. Кăнтăр-хĕвелтухăç Голландире Льессель хули таврашĕнче йывăр çапăçусем пынă. Тăшмана ку хуларан хăваласа кăларнă.

Ноябрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Кельн хулине тапăннă. Союзниксен çарĕсем тăшман хытă тăнине çĕмĕрсе тăкса, Рамбервилье хулинчен хĕвелтухăçнерехре ларакан Сен-Бенуа ятлă пункта кĕнĕ.

### *Союзниксен авиацийĕ Германие тапăнни*

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 600 йывăр бомбардировщикĕ ытла, 950 истребитель ытла хÿтĕлесе пынипе октябрĕн 30-мĕшĕнче тăшманăн Гаммри, Мюнстерти, Гамбургри тата Гарбургри промышленность объекчĕсемпе çулйĕрĕсене тапăннă.

Разведка палăртнă тăрăх, Англи самолечĕсем октябрĕн 28-мĕшĕнче кăнтăрла тапăннине пула, Кельн хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Мюльгейн патĕнчи пысăк район пĕтĕмпех ишĕлсе пĕтнĕ. Промышленноçлă Брауншвейг хулин пысăк пайне те ишсе тăкнă; Англи самолечĕсем октябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Брауншвейг хулине тапăннă хыççăн çав хулан хĕвеланăç тата кăнтăр-хĕвеланăç хĕррисем çеç тăрса юлнă.

Октябрĕн 30-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Кельн хулинчен 9 миля кăнтăртарахра ларакан Весселинг хулинчи синтетически горючи заводне тата тăшманăн Вальхерен утравĕ çинчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Кельн хулине икĕ хутчен тапăннă. Летчиксем каланă тăрăх, çав вăхăтра унта ăна октябрĕн 29-мĕшĕнче тапăннă чухне тухнă пушарсем те сÿнмен.

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Кельн хулине нихăçанхинчен те вăйлăрах тапăннă. Ăна 850 самолет ытла тапăннă. Хула çине 4.000 тонна бомба пăрахнă. Англи самолечĕсене хирĕç Германин нумай истребителĕсем вĕçсе пынă, анчах та Кельн районĕнче зенитнăй артиллери союзниксем кĕтнĕ пекех вăйлă пемен. Англи бомбардировщикĕсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

### АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМПЕ КАРАПĔСЕМ НОРВЕГИ ÇЫРАНĔ ПАТĔНЧЕ КĔРЕШНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Тинĕс-Çар министерстви çапла пĕлтерет: Тинĕс-Çар авиацийĕн авианосецсем çинчи самолечĕсем, флот карапĕсемпе пĕрле кĕрешсе, тăшманăн Норвеги çыранĕ патĕнчи суднисене тата Норвеги çыранĕнчи сооруженисене темиçе хутчен ăнăçлăн атакăланă. Çавăн чухне тăшманăн 6 суднине путарнă, пĕр подводнăй лодкине тата 19 суднине сиенленĕ. Тăшманăн хĕçпăшаллă пароходĕпе тральщикĕ çыран хĕррине сирпĕнсе тухса ларнă.

Самолетсем çĕр çинчи тĕрлĕ сооруженисене ăнăçлăн атакăланă.

# Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире тĕлĕ-тĕлĕпе çеç çапăçнă, тенĕ.

Грецире союзниксен çарĕсем Козани хулинчен çурçĕртерехре нимĕçсен хыçалти чаçĕсене хăваласа пынă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Фронтăн Адриатика секторĕнче 8-мĕш армин чаçĕсем хăйсен Ронко шывĕ çинчи плацдармне аслăлатса çирĕплетнĕ, Ронко шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи Мелдолу хулине тăшмантан тасатнă. Болонья хулинчен кăнтăртарахра 5-мĕш армин Америка чаçĕсем тăшманăн хаяр атакисене сире-сире янă, тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Италири фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем çеç кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç тупăсемпе персе тăнă.

Грецире акăлчансен патрулĕсем Салоники хули патне çитнĕ. Союзниксен çарĕсем тăшманпа çаплах Козани хулинчен çурçĕртерехре çапăçаççĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ пĕр пин вĕçеве яхăн тунă.

### БРИТАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН XVII-мĕш СЪЕЗЧĔ УÇАЛНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер ирхине Шердичри (Лондон хулин хĕвелтухăç районĕ) ратушăра Британири коммунистсен партийĕн XVII-мĕш съезчĕ уçалнă. Съезда уçнă чухне 800 делегат ытла пулнă тата йышлă хăнасемпе пичет представителĕсем пулнă.

Съезда уçнă чухне Исполнительнăй комитет секретарĕ Галлахер сăмах тухса каланă.

# Колхоз чысне сÿлте тытассишĕн!

Районра е ялсоветĕнче лайăх ĕçлекен колхоз пулсан, вăл колхозпа пурте мухтанма тăрăшаççĕ. «Пирĕн колхозăн вăл пур, ку пур», теççĕ. «Пирĕн колхоз ку ĕçе тахçанах туса пĕтерне», тесе савăнаççĕ. Вăл колхоз членĕ урăх колхоз членĕпе тĕл пулсан: «Эпĕ çав колхозран-ха», тесе мăнкăмăллăн калать, хăйсен колхозне таврара пурте пĕлеççĕ тесе шанса тăрать. Чăнах та, кам пĕлмест пулĕ-ха пирĕн республикăра Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоза? Кам пĕлмест пулĕ Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Марс» колхозсене? Вĕсем пек колхозсене ытти районсенче те курма пулать. Кашни районах хăйĕн пĕр-пĕр лайăх ĕçлекен колхозĕпе мухтанать. Çав колхозсен ячĕ хисеплĕ, вĕсен чысĕ пысăк. Çав колхозсенче пурăнма тата ĕçлеме кăмăллă, савăнăçлă, мĕншĕн тесен вăл колхозсен кашни членне районра та, ытти колхозсенче те чыслаççĕ, хисеплеççĕ. «Маттур ĕçлетĕр, чыса сÿлте тытатăр», теççĕ вĕсене.

Анчах тепĕр майпа «чапа» тухакан колхозсем те пур-ха. Вĕсем çулран çулах пур ĕçсенче те юлса пыраççĕ, начар тырпул туса илеççĕ, выльăх-чĕрлĕхе япăх пăхса усраççĕ, вĕсен çуртйĕрĕсем юхăнса ишĕлсе пыраççĕ. Ун пек колхозсенче культурăлăх та çукрах: колхоз канцелярийĕнче таса мар, колхозра мунчасем сахал, вулав çуртĕ ĕçлемест, хаçат-журналсене вуласа пымаççĕ, ял хушшине таса тытмаççĕ, тĕрлĕ кружоксем ĕçлемеççĕ т. ыт. те. Çакăн пек колхозсем çинчен те нумай калаçаççĕ, нумай çыраççĕ, анчах мухтаса мар, хурласа калаçаççĕ. Ун пек колхозсенче ĕçлеме, тÿрлĕпех каласан, кăшт кичемрех, мĕншĕн тесен вăл колхозсене хисеплемеççĕ, часчасах хурлаççĕ. Вăл колхозсен членĕсем кÿршĕри колхозниксем умĕнче нимĕнпе те мухтанма пултараймаççĕ. Чăнах та ĕнтĕ, юлса пыракан, начар ĕçлекен колхоз членĕ мĕнпе мухтанма пултартăр-ха?

Анчах ĕç кунта мухтанассинче кăна мар. Юлса пыракан колхозра пурнăç та урăхларах пулать. Кая юлса акнă пирки тырă начар пулать, тырă начар пулнă пирки ĕçкунĕсем тăрăх сахал валеçеççĕ. Государство умĕнче парăмра пулаççĕ. Çакăн пек колхозăн епле-ха ĕнтĕ чысĕ сÿлте пулма пултартăр?

Нумаях пулмасть, пирĕн пĕр колхозникпе калаçмалла пулчĕ. Вăл Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз çинчен лайăх пĕлет. Сăмах майĕн вăл çапла каласа хучĕ:

— Пирĕн пур колхозсем те çав колхоз пек ĕçлес пулсан, епле пурнăç лайăх пулнă пулĕччĕ! Çапла мар-и? А пирĕн колхоз?.. Колхоз-и вăл пирĕн колхоз? Пĕр ĕçе те вăхăтра туса пыраймастпăр та. Пĕри—ĕçлет, тепри — пасарта çÿрет, виççĕмĕшĕ — килте ларать.. Ĕç пултăр-и ĕнтĕ вăл! Ятне те «Акатуй» тесе ят панă тата. Чăнах та, акатуйĕнчи пекех ĕнтĕ: кам мĕнле шутлать, çавăн пек аркашать..

Колхозник сăмахне эпир пĕтĕмпех илсе кăтартмăпăр. Вăл хăйсен начар ĕçлекен колхозĕ пирки чылаях хытă калаçрĕ. Колхоз кая юлнишĕн пуринчен ытла унăн председательне хытă ятларĕ. Тĕрĕс-и çакă? Паллах, колхоз председателĕн айăпĕ кунта пĕчĕк мар. Вăл тăрăшса ĕçлесен, ĕçе нумай юсама пултарать. Анчах вăл пĕччен нимĕнех те тума пултараймасть. Колхоз кая юлнăшăн унăн членĕсем те хăшпĕр таран айăплă пулса тăраççĕ. Колхозри ĕçе вăхăтра тăвас тесе, кашни колхозникех тăрăшсан çеç ĕç ăнса пырать. Колхоз пурнăçне юсассишĕн, колхоз чысне сÿлте тытассишĕн кашни колхозникех тăрăшмалла. Çакă вăл пирĕн пĕтĕм çĕршыв тĕрекĕшĕн тăрăшни, тăшмана çĕнтерессишĕн тăрăшни пулать. Çакă вăл пирĕн Тăван çĕршыв патриочĕн чыслă тивĕçĕ пулать. Мĕншĕн тесен кашни колхоз лайăх ĕçлесен çеç, кашни колхоз тĕреклĕ пулсан çеç пирĕн государство çителĕклĕ таран тĕреклĕ пулма пултарать. Ку вара çакна пĕлтерет: колхоз кая юлса пырать пулсан, ăна мала кăларассишĕн унăн кашни членĕн тăрăшмалла, пĕр-пĕрин çине шанса лармалла мар. Çапла тусан кăна колхозăн ятне сÿлте тытма, тÿрре кăларма пулать.

Пирĕн колхозсен кашниннех хăйсен ячĕсем пур. Нумай ялхуçалăх артелĕсем çулпуçсен ячĕсемпе тăраççĕ е урăхла ятпа хисепленеççĕ. Колхозăн ячĕ вăл — ахаль ят мар, пушă сăмах мар. Вăл колхозпа колхозниксен туйăмне, ĕмĕтне, вĕсен ĕçне тата пурнăçне палăртса тăракан ят пулса тăрать. Çавăнпа та вăл колхоз çине пысăк ответлăх та хурать. Çулпуçсен мухтавлă ячĕпе е урăхла чаплă ятпа хисепленсе тăратăн пулсан, çав ята тÿрре кăларма, ăна сÿлте тытма тăрăш, ăна начар ĕçленипе ан варала, — акă мĕн калать колхоз ячĕ унăн членĕсене. Сăмахран, «Çĕнтерÿ» ятлă колхозсене час-часах тĕл пулма пулать. Хальхи вăхăтра та тата ытти чухне те «çĕнтерÿ» сăмах хисеплĕн янăрать, колхоз çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пымаллине кăтартать. Анчах «Çĕнтерÿ» ятпа хисепленсе тăракан колхозсем хушшинче начар ĕçлекеннисене те курма пулать. Вăл колхозсенче çĕнтерÿ çукрах. Çакă вара кунта колхоз ятне чысра тытма тăрăшманнине, хăйсен колхозĕ хисепленекен ята тÿрре кăларма тăрăшманнине пĕлтерет. Ку ĕнтĕ, паллах, питĕ килĕшÿсĕр япала.

Хулари рабочисем хăйсен предприятийĕн ятне, фабрика маркин чысне сÿлте тытассишĕн кĕрешеççĕ, лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма тăрăшаççĕ, браксене хирĕç кĕрешеççĕ, производство планне уйăхран уйăха тултарма тăрăшаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен те хăйсен колхозĕн ятне, чысне сÿлте тытассишĕн кĕрешес пулать.

Кунта, сăмах майĕн, хăшпĕр колхозсен ячĕсем пирки пĕр-ик сăмах каласа хăвармалла. Акă, Муркаш районĕнче «Хăймала» (вырăсла «Сметана») ятлă колхоз пур. Çак ят килĕшÿллĕ теме пулать-и-ха? Çук, пулмасть. Вăл колхозăн ĕçĕпе те, ĕмĕчĕпе те, пурнăçĕпе те нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть. Кунти колхозниксем хăймалашăн кăна тăрăшман та, тăрăшмаççĕ те. Ун пек ĕмĕт вăл ытла та пĕчĕк ĕмĕт пулнă пулĕччĕ. Шупашкар районĕнче «Арăслан» ятлă колхоз пур. Мĕне пĕлтерет-ши ĕнтĕ ку? Колхоз арăслан пек хаяр пулмаллине-ши? Хĕрлĕ Чутай районĕнче «Лоба», Шупашкар районĕнче «Хучахмат» ятлă колхозсем, Октябрьски районра «Анис» ятлă колхоз, Сĕнтĕр районĕнче «Будильник» ятлă колхоз, Çĕрпÿ районĕнче «Планета» ятлă колхоз пур. Мĕн çинчен калама пултараççĕ-ха ĕнтĕ çак ятсем, мĕнле хисеплĕх пултăр вăл ятсен? Сăмахран, «Анис» ятлă йывăç улми тата курăк пур. Вĕсем ытти улмасемпе курăксенчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмаççĕ: улма та улма, курăк та курăк. Çав ята йышăнма колхозăн мĕнле сăлтавсем пулччăр-ха? Паллах, çук.

Колхоз ячĕ хисеплĕ те мухтавлă ят пулмалла. Çав ята чысра тытассишĕн вара колхоз руководителĕсен те, мĕнпур колхозниксен те кĕрешмелле.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00775. Типографи № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.